Пурнăç пуйăсĕ

Ах, тĕллевĕм çутăччĕ, тĕрĕ пек эрешлĕччĕ,
Кăвак çутă килнĕ пек çĕнĕ кун хĕлхемлĕччĕ.
Ĕçлĕх, чыслăх, юрату, çамрăк сыннăн ĕмĕчĕ
Пĕр пуçкăшăль çыхнă пек шухăшсем илемлĕччĕ.

Çав кăвак хуппи патне йĕр хывма пикеннĕччĕ,
Утнă чух утаттăмччĕ, вĕçнĕ чух вĕçеттĕмччĕ.
Такăнса ӳкме тивсен васкасах тăраттăмччĕ,
Вăйăм-халăма пухса малаллах чупаттăмччĕ.

Аслатийĕ авăтрĕ, çавра çилĕ çавăрчĕ,
Çӳлелле çĕкленесле çил арманĕ авăрчĕ.
Авăнмарăм теттĕмччĕ, парăнмарăм теттĕмччĕ,
Ирĕн-каçăн умăмра çăлтăрлă кĕтретĕмччĕ.

Пусрăм та шуçлак çĕре – ӳкрĕм, тăтăм,
вирхĕнтĕм,
Чĕремре – çав пĕрхĕтĕм, пуçăмра –
çав ĕмĕтĕм...
Çитрĕм те хайхи станца – тĕлĕнсе тĕсерĕçĕ,
«Шел, тăванăм, питĕ шел, пуйăс кайрĕ», – терĕçĕ...

Сементер, Ю. Пурнăç пуйăсĕ : [сăвă] / Ю. Сементер // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 438.